25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942. МАЙ 23 ШАМАТКУН 118(6053) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлеш ĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чугунçул транспортĕнче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилер

Ленински чугунçулăн Мускав узелĕнче ĕçлекенсем пĕтĕм Совет Союзĕнчи железнодорожниксене чĕнсе калани

ХАКЛА ЮЛТАШСЕМ!

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ ма...н 1-мĕш ячĕпе панă приказа пĕтĕм совет халăхĕ нимĕç фашисчĕсен войскисене 1942 çулта тĕппипех аркатса тăкма чĕнни вырăнне хурса пысăк хаваслăхпа йышăнчĕ. Геройла Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле пырать, аслă совет ялавĕ хамăрăн пĕтĕмпех ирĕке тухнă çĕр çинче çĕнтерӳллĕн вăркăшса тăрас кун инçе мар.

Совет çĕршывĕ пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ, вăл хăйĕн мĕнпур хăвачĕпе тăшмана хăвăртрах çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пулăшса тăрать. Фронтпа тыл çĕнтерӳ тăвас шухăшпа пурăнаççĕ. Аслă Сталинăн майăн пĕррремĕшĕнчи приказĕ ĕçри çĕнĕ хавхаланăва, массăсем хушшинчи социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ хумне çĕклентерсе ячĕ. Металлургсем, самолет тăвакансем, мотор тăвакансем, танк тăвакансем пĕтĕм Союзри ăмăртăва сарса ярса, фронта хурçă, чугун, прокат ытларах пама, самолетсем, моторсем, танксем ытларах туса пама пулчĕç.

Эпир, железнодорожниксем, хамăр çĕршыв умĕнчи пĕтĕм ответлăха туйса тăрса тата оборона промышленноçĕнче ĕçлекенсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, тăшманшăн хăрушă продукцие, материалсене тата промышленность валли кирлĕ чĕртавара вăхăтра, хăвăрт, пĕр тытăнмасăр турттарса тăма сăмах паратпăр, çак майпа хамăр Хĕрлĕ Çарăн наступлениллĕ операцийĕсенче кирлĕ япаласем пурте çителĕклĕ пулччăр тесе тăрăшатпăр.

Сталин юлташăн майăн пĕррремĕшĕнче панă приказĕ чугунçул çинче ĕçлекенсене тимлĕхе халиччеххинчен икĕ хут ытла ӳстерме, чугунçулсем тăрăх турттармалли государство планне ытлашшипех тултарма, поездсене график тăрăх хăвăрт çӳретме, паровозсемпе тата вагонсемпе лайăхрах усă курма хушать. График тăрăх, кая юлмасăр ĕçлесе, железнодорожниксем пĕтĕм транспорта йĕркеллĕн тата пĕр тикĕс ĕçлесе пыма майсем туса парĕç.

Эпир, чугунçул çинче ĕçлекенсем, фронтпа тыла çыхăнтарса тăратпăр. Пирĕн тикĕссĕн, йĕркеллĕн пыракан ĕç—фашизма аркатас тĕлĕшпе пурте пĕрле тăвакан ĕçе хывнă пысăк вклад пулса тăрать. Ĕçри чăн-чăн дисциплинăна транспортра çирĕплетсе пырасси ытти çĕртинчен те ытларах кирлĕ.

23 çул каялла, майăн 10-мĕшĕнче, Мускавпа Хусан чугунçулĕн (хальхи Ленински чугунçул) Мускав узелĕнче ĕçлекенсем, Ленин—Сталин партийĕ фронта пулăшма чĕнни çине революциллĕн ответлесе, малтанхи коммунистла субботнике туса ирттернĕ, Владимир Ильич Ленин çак субботнике «Аслă пуçару» тенĕ. Çак малтанхи коммунистла субботникĕн хĕмĕнчен массăллă социализмлă ăмăртусен çулăмĕ тухса, пĕтĕм халăх хушшине сарăлнă, унтанах пĕтĕм халăх хуçалăхĕнчи хăватлă стахановла движени тата транспортри стахановла-кривоносовла движени сарăлса кайрĕ.

Эпир, Ленински чугунçулăн Мускав узелĕнче ĕçлекенсем, пĕтĕм Совет Союзĕнчи железнодорожниксене пурне те чугунçул çинче ĕçлекенсен революциллĕ чаплă традицийĕсене чи паха япала пек сыхласа усрама чĕнетпĕр. Сталин юлташăн боевой приказĕ çине транспортри ĕç хаваслăхне çĕнĕрен çĕклесе яннипе ответлеме, поездсене хăвăрт çӳретес енĕпе железнодорожниксен пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртуне сарса яма, фронтпа тыла мĕн кирлисене пĕр тикĕссĕн турттарса тăма, государствăн вăрçă вăхăтĕнче турттармалли заданийĕсене ытлашшипех тултарса пыма чĕнетпĕр.

Социализмлă ăмăртăва сарса, эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Поезд çӳретес тĕлĕшпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ панă виçесене кашни талăкра пĕтĕмĕшпех, çĕр процент таранах тултарса пымалла.

2. Паровозсемпе паровоз бригадисен ĕçĕсене график тăрăх организацилесе, поездсене 100 процентчĕпех расписани тăрăх кăларса ярса çӳретмелле.

3. Поездсене йĕркелес плана хытă пăхăнса пымалла, тĕрĕс йĕркелемен состав кăларса яни пĕрре те пулмалла мар, ĕçри практикăра лунинла движенин меслечĕсемпе анлăн усă курмалла, поездсен пĕтĕм составĕсенчен 60—70 процентне Краснов—Кожухарь меслечĕсемпе йĕркелемелле.

4. Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ пушă вагонсене ăсатса тăрас тĕлĕшпе панă заданисене пĕтĕмĕшпех тата срокра тултарса тăмалла.

5. Фронта каякан çар транспорчĕсемпе эшелонĕсене тиессин тата вĕсене çӳретессин заданийĕсене пурне те срокра пурнăçласа пымалла, çапла майпа поездсене нормăран 10 процент ирттерсе хăвăртрах çӳретмелле.

6. Локомотивсене юсассинче технологи процесĕсене хытă пăхăнса пырса, çуса тасатмалли ремонтра тăрас вăхăта нормăран 7 процент тата подъемнăй ремонтра тăрассине 13 процент таран чакармалла.

7. Топливăна 5 процентран кая мар перекетлемелле тата топливо юлашкийĕсемпе 7 процентран кая мар усă курмалла.

8. Паровоз бригадисенче лунинла ĕç майĕсемпе анлăн усă курса, паровозсене техника тĕлĕшпе лайăх пăхса усрамалла.

9. Товарнăй вагонсене юсаса кăлармалли вăтам плана кашни уйăхрах тултарса пымалла, пассажир вагонĕсене çулталăкра пăхса тухас плана 20 процент тата товарнăй вагонсене пăхса тухассине 5 процент таран ӳстермелле.

10. Чугунçула куллен тӳрлетсе тăрас плана ытлашшипех тултарса, чугунçулăн кашни километрне лайăх тытса усрамалла.

11. Хула çывăхĕнче çӳрекен поездсене тата пассажир поезчĕсене 100 процентчĕпех расписани тăрăх кăларса çӳретмелле.

12. Вокзалсене, станцисене кăтартуллă тасалăхра, йĕркеллĕн тытса тăмалла, пассажирсене культурăллăн пăхмалла, çар çыннисемшĕн ытларах тăрăшса, вĕсене мĕн кирлине туса памалла.

13. Харпăрхăйĕн продовольстви базине тумалла. Çавăнпа та подсобнăй хуçалăхсене вăйлатмалла, пĕчченшерĕн е коллективлă пахчасем тумалла, столовăйсемпе буфетсен ĕçĕсене майласа ямалла.

Чугунçул çинче ĕçлекен юлташсем!

Тăван çĕршыв пире çапла тума хушать: пирĕн тăшмана 1942 çулта аркатса тăкма кирлĕ япаласене пурне те фронта тата оборона валли ĕçлекен промышленноçа пĕр таттисĕр турттарса парса тăмалла. Хамăрăн тăван çĕршыв умĕнчи хисеплĕ тивĕçе чыслăн пурнăçлар.

Çакна астăвăр: вăхăтра çитерсе панă кашни состав, график тăрăх кăларса çӳретекен кашни поезд, кашни лайăх юсаса кăларнă паровоз, кашни вагон, юсавлă тытакан кашни километр çулпа çыхăну вăл—тăшмана çапса амантни пулать.

Поездпа çӳрекенсем тата грузчик юлташсем!

Поездсене хăвăрт çӳремелле, тиемелли-пушатмалли плана пĕр сăмахсăр тултарса тăмалла, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн приказĕсене пĕр сăмахсăр пурнăçласа тăмалла тăвар, пысăк станцисемпе чугунçул узелĕсем поездсем йĕркелес тĕлĕшпе тата поездсене ирттерсе ярас тĕлĕшпе ĕçлессине лайăхлатар.

Эпир поездсем йĕркелекен диспетчерсене, станцисенчи, чугунçул тăрăхĕнчи дежурнăйсене, стрелочниксене, аслă кондукторсене чугунçула пĕтĕм талăкĕпе пĕр тикĕссĕн ĕçлесе тăмалла тума чĕнетпĕр, ку тĕлĕшре стахановла-кривоносовла ĕç меслечĕсемпе усă курма сĕнетпĕр.

Паровозсем çинче ĕçлекен юлташсем!

Локомотивсене Лунин пек пăхса усраса, участокри тата техникăри хăвăртлăхсен нормисене ытлашшипех тултарса пырса, паровозсене пĕр чăрмавсăр парса тăмалла тăвăр, çапла майпа поездсем çӳрес графика тултармалла тăвăр. Грузсем тиенĕ поездсене фронтпа тыл валли кривоносовла хăвăртлăхпа çӳретер!

Эпир машинистсене, помощниксене, кочегарсене, юсас ĕçре ĕçлекенсене паровоз çӳремелли графика çирĕппĕн ĕçе кĕртсе пыма, паровозсене кăтартуллăн, культурăллă тытса усрама, локомотивсене пысăк пахалăхпа тата срокра юсаса çитерме чĕнетпĕр.

Вагонсем çинче ĕçлекен юлташсем!

Вагонсене кăтартуллăн тĕрĕслесе тата юсаса поездсем вăхăтра тата аварисĕр, график тăрăх çӳрессине ĕçе кĕртсе пырар. Эпир смена мастерĕсене, поездсенчи мастерсене, вагонсене тĕрĕслекенсене тата автоматчиксене вагона отлично пăхса усрама, вĕçертсе уйăрса илмесĕрех юсассине анлăн ĕçе кĕртсе пыма, юсассине кĕтсе ларакан вагонсен хисепне чакарма чĕнетпĕр. Автотормозсене яланах пĕр пăсмасăр ĕçлеттерессишĕн ăмăртас ĕçе организацилер!

Çулйĕр çинче ĕçлекен юлташсем!

Çулйĕр хуçалăхне кăтартуллăн тата типтерлĕн пăхса усрăр, отлично усракакан стахановла километрсемпе стрелкăсене нумайлатассишĕн кĕрешĕр, çулйĕрĕн кашни километрне, кашни шпала, кашни сыпăка тимлĕн сыхлăр. Çулйĕрсене çуллахи вăхăтра юсассин планне пурнăçа кĕртĕр тата ирттерсе тултарăр!

Юлташсем—çулйĕр мастерĕсем, бригадирсем тата çулйĕрсене сăнаса тăракансем! Поездсем график тăрăх шанчăклăн çӳрессине ĕçе кĕртĕр. Çулйĕрсем çинчи ĕçсене пурне те палăртнă срокра пĕтĕмпех тата пысăк пахалăхпа туса çитерĕр!

Çыхăну ĕçĕнче ĕçлекен юлташсем!

Çыхăну хатĕрĕсене тата сигнал памалли хатĕрсене пурне те яланах пĕр пăсăксăр ĕçлеттерессишĕн, автоблокировкăпа электроцентрализацие тата ытти хатĕрсене пурне те тĕрĕс ĕçлеттерессишĕн кĕрешĕр!

Юлташсем — чугунçул завочĕсен работникĕсем!

Паровозсемпе вагонсене юсас ĕçĕн программине пурнăçа кĕртсе пырăр тата ирттерсе тултарăр. Фронт валли кирлĕ продукцисене туса кăларассине пур майсемпе те вăйлатса пырăр. Заводсенче индустрин аслă культурин кăтартнă пек ĕçлессине анлăн сарăр!

Юлташсем — чугунçул войскисен боецĕсем, командирĕсем тата политработникĕсем!

Ĕçе тĕрĕс те йĕркеллĕ организацилесе, васкавлă методсемпе ĕçлесе, фашистла захватчиксенчен ирĕке кăларнă территорисем çинчи чугунçул хуçалăхне хăвăрт юсаса пырăр! Пурнăçа шеллемесĕр тăрăшса, Хĕрлĕ Çара наступлени туса пыма кирлĕ ĕçсене туса пырăр.

Юлташсем — чугунçул тăвакан строительсем!

Строительствăсен срокĕсене кĕскетессишĕн кĕрешĕр, капитальнăй строительствăн программине пурнăçа кĕртĕр тата ирттерсе тултарăр, механизмсемпе анлăн усă курăр, чугунçулсене поездсене нумайтарах çӳреме юрăхлă тума пур майсемпе те тăрăшăр!

Ĕçе тĕрĕс организацилесе, васкавлă методсемпе ĕçлесе, строительство ĕçĕсене хăвăрт туса пырăр!

Промышленность предприятийĕсенчи транспорт цехĕсен работникĕсем!

Вагонсене подъезднăй çулсем çинче тытса ан тăрăр, вагонсем куçса çӳремесĕр ларнин срокне чакарма тăрăшăр, вагонсемпе усă курассине государство ĕçĕ вырăнне хурса тăрăшса ĕçлĕр, пире, железнодорожниксене, куçса çӳрекен состава яланах ĕçлеттерес тĕлĕшре пулăшăр!

Юлташсем — чугунçул транспорчĕн командирĕсемпе политработникĕсем!

Транспорт работникĕсене пурне те Сталин юлташăн боевой приказне пурнăçа кĕртме тачă пĕрлештерер, кашни железнодорожника хушнă ĕçшĕн пысăк ответлăха туйса тăракан шухăш-кăмăллă пулма воспитани парар, партипе правительствăн заданийĕсене, Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн приказĕсене тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçа кĕртсе пымалла тăвар, транспортра çарти пек дисциплина тăвар, сыхăл...а пур майсемпе те ӳстерер!

Поездсене çӳретмелли график кашни железнодорожникшăн закон пулса тăмалла тăвар. Социализмлă ăмăртăва большевикла ертсе пырар! Вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен, лунинецсен йышне кунран-кунах ӳстерсе пырар!

Эпир социализмлă ăмăртура лайăх результатсем кăтартакан, малта пыракан çула, отделение, станцие, вагонсен участокне, çулăн дистанцине тата завода пама Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тума ыйтатпăр. Эпир ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнчен ăмăрту итогĕсене кашни уйăхрах тума, транспортăн малта пыракан предприятийĕсен ĕçри опычĕсене анлăн сарса пыма ыйтатпăр.

Хамăрăн мĕнпур вăйсене фронта пулăшма, тăшмана аркатса тăкма парар!

Юлташсем—железнодорожниксем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухăр, железнодорожниксен кунне транспортра çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илер!

Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче кĕрешсе, Аслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пынипе, железнодорожниксем, çĕнтерӳсем тума — малалла!

Çырăва Ленински чугунçулăн Мускав узелĕнчи депосен, станцисен, вагонсен участокĕсен, çулăн дистанцийĕсен тата çыхăнури рабочисен, служащисен, инженерно-технически работниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явса йышăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 21-мĕшĕнче Харьков енче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Изюм—Барвенково енче противникăн атакисене сирсе пăрахнă.

Керчь çурутравĕн хĕвелтухăç пайĕнче çапăçусем пулса пынă.

Тĕплĕнрех палăртнă даннăйсем тăрăх, майăн 19-мĕшĕнче нимĕçсене малтан пĕлтернĕ пек 27 самолет мар, 40 самолет пĕтерсе тăкнă.

Майăн 20-мĕшĕнче противникăн 65 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн 23 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 20-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 74 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 272 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 55 лавне, 31 полевой тата зенитнăй орудине, 15 миномечĕпе пулемечĕсене, пĕр бензозаправщикне, 5 трактор-тягачне, пĕр прожекторне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, 5 катерне путарнă, противникăн пехотине 7 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче пирĕн пĕр часть халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем нумай. Скляров юлташăн подразделенийĕ пĕр кун хушшинче противникăн 4 контратакине сирсе пăрахнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна çити вĕлернĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем 7 оруди, 12 пулемет, 8 миномет, боеприпассем тиенĕ 4 автомашина тата радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн артиллеристсем персе тăшман артиллерин икĕ батарейине, миномётсен 4 батарейине пĕтерсе тăкнă, 15 дзотне çĕмĕрнĕ, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 120 çынран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Танка хирĕç пемелли пăшалсен Федоренкăпа Кузнов юлташсем командир пулса ертсе пыракан расчечĕсем нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Нимĕçсен дзотĕнчен инçех мар вырăнта разведчиксем: отделени командирĕ Бодров юлташ тата боецсем—Хлюстов, Тупаков, Петров засада тунă. Вăхăт нумаях та иртмен, дзот патне 40 яхăн гитлеровец пынă. Разведчиксем гранатăсем ывăтса тата ручной пулеметсенчен персе 30 нимĕçе пĕтерсе тăкнă та хăйсен чаçне пурте сывах таврăннă.

* * *

Лейтенант Геля юлташ тата политрук заместителĕ Долгин юлташ ручной пулеметран тата автоматран персе тăшманăн «Хейнкель — 126» йышши пĕр самолетне ӳкернĕ.

* * *

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа хисепленсе тăракан партизанла отряд, Смоленск облаçĕн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенче кĕрешекенскер, оккупантсене питĕ пысăк сиен кӳнĕ. Партизансем хăйсен çапăçăвĕсем вăхăтĕнче 3 пин ытла гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 125 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Нимĕç чаçĕсемпе подразделенийĕсен 12 штабне аркатса тăкнă, 3 танкне, 4 орудине, 18 минометне, 43 пулеметне, 3 радиостанцине, боеприпассен 11 складне тата продовольствин 9 складне пĕтерсе тăкнă. Партизансен отрячĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен 6 оруди, 25 миномет, 42 пулемет, 650 винтовка, 29 автомат, 60 пистолет, 2.500 граната, икĕ радиостанци, 5 мотоцикл, 30 велосипед, 172 лаша, 250 лав, 3 кухня тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Вĕлернĕ нимĕç унтер-офицерĕн (унăн хушаматне палăртма май килмен) записной кĕнекинчи хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «Пире фронта илсе каяççĕ. Пирĕн ротăра кивĕ салтаксем темиçе çын çеç. Рекрутсем хумханаççĕ... Вырăссем пирĕн çула пӳле-пӳле лартаççĕ. Малалла кайма çул уçăласса нумайччен кĕтсе тăратпăр. Фронт патне çывхарнăçемĕн малалла хулленрех те хулленрех куçма тивет. Енер пирĕн çине вырăссен самолечĕсем вĕçсе килсе тапăнчĕç. Чĕрĕ юлнă салтаксем ĕнерхи куна нихăшĕ те манас çук. Эпир противник патне çитеймен-ха, анчах та çĕр халех ĕнтĕ пирĕн чылай салтаксен юнĕпе сăрханчĕ. Пирĕн вилнисемпе аманнисем питĕ нумай. Ульмара çĕнĕрен йĕркеленĕ 56-мĕш пехотнăй полкран часах, акă, ячĕ çеç тăрса юлĕ. Çак вăрçă çине эпĕ тарăхатăп. Вăрçăри телей вăл питĕ те ултавлă япала пулса тăчĕ».

* * *

Вĕлернĕ нимĕç салтакĕ çумĕнче вăл ашшĕ патне çырнă çырăва тупнă, çырура çапла каланă: «...Тата хамăрăн хурлăхлă пурнăç çинчен çырса пĕлтерем. Эпир кунĕн-çĕрĕн канăç курмастпăр. Пирĕн пата Францирен çĕнĕ дивизисем килсе çитрĕç. Апла пулин те пире халĕ те улăштармаççĕ. Чĕре çав тери хытă ыратать. Вырăссем çине тунă поход киревсĕрле авантюра пулса тăчĕ тесе эсĕ тĕрĕс калатăн...»

* * *

Норвегире нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем учительсене массăллăн арестлесе концентрациллĕ лагерьсене ăсатнă. Осло округĕнчи 40 учителе пысăках мар судно çине лартса тинĕс тăрăх инçете илсе кĕрсе кайнă. Çав судно патне çар катерĕ çывхарнă та, судно çинчен унăн командипе охранине хăй патне илсе, суднăна унти арестленĕ çынсемпе пĕрлех шыва путарнă. Пĕр учителĕ ăнсăртран çăлăнса юлнă. Ăна Норвегири пулăçсем курса çăлса хăварнă пулнă.

Майăн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Харьков енче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Керчь çурутравĕ çинче çапăçусем çав çурутравăн Хĕвелтухăç пайĕнче пулса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă ĕçсемех пулман.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче тăшман контратака тунă. Пĕр харăс вăйлăн пырса çапса, пирĕн боецсем нимĕçсене каялла хăваламa тытăннă та чакса пыракан противник хыççăнах халăх пурăнакан пункта кĕрсе кайнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 370 çын вилсе юлнă. 4 оруди, 12 пулемет, 5 миномет, боеприпассен складне, 2 тягач тата продовольстви тиенĕ 12 лава тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн часть, малалла куçса пырса, нимĕçсен 3 танкне, 2 орудине тата 8 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын ытла вилнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противник совет войскисем вырнаçнă вырăна атакăлама хăтланса пăхнă. Пирĕн чаçсем контратака туса нимĕçсене вĕсен малтанхи позицисем çине хăваласа янă. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла, 6 танкне, минометсен 2 батарейине тата 7 автомашинине пĕтерсе тăкнă, противникăн боеприпассем хунă 2 складне сирпĕнтерсе янă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем нимĕçсен 2 танкне, бронемашинине, орудине тата 7 минометне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче 300 ытла гитлеровец вилсе юлнă.

* * *

Степан Петрович Ямутков красноармеец ертсе пыракан пирĕн 5 боец тăшманăн блиндажне пырса кĕнĕ те, штык вĕççĕн çапăçса, нимĕçсен 18 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Т. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекенскер, противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пырать. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем партизансене хирĕç пехотăн пĕр батальонне 5 танкпа пĕрле янă. Партизансем гитлеровецсен атакине ăнăçлăн сирсе пăрахса, нимĕçсен 2 танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

Нимĕçсен тыткăна лекнĕ фельдфебелĕ Леопольд Штеффан çапла каласа панă: «Эпĕ сывлăшри почтăн экспедицийĕнче ĕçленĕ. Мана Украинăн тĕрлĕ районĕсенче пулма тиврĕ. Майăн 12-мĕшĕнче эпĕ Харькова вĕçсе кайрăм. Çакă вăл манăн юлашки вĕçев пулчĕ. Эпир маршрутран пăрăнса çухалса кайрăмăр та вырăссем йышăнса илнĕ территори çине пырса тухрăмăр. Советăн зенитнăй артиллерийĕ пирĕн «Юнкерс—52» йышши транспортнăй самолета персе ӳкерчĕ. Экипажпа пĕрле машинăра 15 çын пулнă. Украинăн нимĕç войскисем йышăннă районĕсенче хресченсем нимĕç влаçĕсен пур мероприятийĕсене те саботаж тăваççĕ, хăйсене кирлĕ чухлĕ çĕрен пĕчĕк участокĕсене çеç акса хăвараççĕ».

* * *

Нимĕç бандичĕсем Ленинград облаçĕнчи Кривино ялĕнчи учителе Воробьева чĕрĕллех çĕре чавса пытарнă.

* * *

Берлинра, Кельнра, Ганноверта, Франкфуртра, Дрезденра тата Германин ытти хулисенче гестапо суд ĕçĕнчи чиновниксен ушкăнне арестленĕ. Пĕлтернĕ тăрăх, арестленисене вĕсем вăрçăпа тата гитлерла йĕркесемпе килĕшмен çынсем тĕлĕшпе çăмăл приговорсем йышăннă тесе айăпласçĕ.

ТАСС опроверженийĕ

Германи информаци бюровĕ тата, ун хыççăн, унăн хӳрешки—Италири Стефани агентстви хыпар сарнă. Çав хыпар тăрăх, майăн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Босфора кĕнĕ çĕрте совет подводнăй лодки туроксен «Дуатепе» ятлă моторлă суднине путарнă пулать. ТАСС çакна пĕлтерме полномочи илнĕ: нимĕçсемпе итальянецсен провокаторĕсен çак пĕлтерĕвĕ ирсĕр элек пулса тăрать.

Ĕç резервĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕшĕн

Оборона промышленноçĕпе транспорт валли квалификациллĕ рабочисем тата массăллă професси рабочийĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе правительство панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕ наградăланисен шутĕнче пирĕн Чăваш республикинче ĕçлекен работниксем те пур. Государствăн Ĕç резервĕсен Чăваш АССР Управленин начальникне Г. И. Иванов юлташа «За трудовую доблесть» медальпе, пĕррремĕш номерлĕ чугунçул училищин директорне А. Н. Белчинский тата иккĕмĕш номерлĕ ФЗО шкулĕн директорне В. С. Суриков юлташсене «За трудовое отличие» медальпе наградăланă.

Танксен çапăçăвĕ

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, майăн 20-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Пирĕн фронтăн пĕр участокĕнче танксен вăйлă çапăçăвĕ пулса иртнĕ, ку çапăçура совет хĕçпăшалĕ çĕнĕ çĕнтерӳ тунă.

Тăшман оборонин линине татнă хыççăн пирĕн танксем хамăрăн пехотинецсемпе пĕрлешме пынă. Тăшмана хирĕç танксем пĕр енчен, пехота тепĕр енчен çапăçнă. Çак вăхăтрах сывлăшра нимĕç бомбардировщикĕсемпе штурмовикĕсем курăнса кайнă. Вĕсем пирĕн танксене атакăласа бомбăсем пăрахма тытăннă, анчах нимĕпле сиен те туман.

Çакăн хыççăн çывăхри совхоз енчен нимĕç танкĕсен колонни пыни курăннă. Вĕсем виçĕ эшелонпа пынă. Пирĕн танксем пĕр вырăнта тăрса нимĕç танкĕсене хирĕç хаяррăн пеме пуçланă. Нимĕç танкĕсем пысăк çухатусем туса каялла çавăрăнса кайнă. Тӳрех хирĕç пынипе ĕç тухманнине кура, нимĕçсем чеелĕхпе усă курма шутланă. Пирĕн танксем умне 8 танк çеç кăларса, ытти танкĕсемпе флангсенчен пырса çапма хатĕрленнĕ. Анчах та тăшман мĕн шутланине пирĕннисем часах сиснĕ. Тăшман танкĕсене çывăхалла янă та пирĕн танкистсемпе артиллеристсем вĕсене тӳррĕн тĕллесе персе аркатма тытăннă. Пĕр сехет ытла танксем хире-хирĕç вăйлăн перкелешсе çапăçнă. Çапăçура нимĕçсем хăйсен машинисенчен çуррине яхăн çухатнă та ирĕксĕрех каялла çавăрăнса кайнă. Пирĕн танкистсем хушшинче пуринчен ытла çамрăк боецсем пулнă, вĕсем арăслансем пек хаяррăн çапăçнă. Вĕсем тӳрĕ тата тĕл лектерме пĕлнĕ. Макаров юлташ экипажĕ нимĕçсене 4 танк тата пĕр зенитнăй оруди çĕмĕрнĕ, Герасимов юлташ экипажĕ 2 танк пĕтернĕ.

Аслă лейтенант Поляк юлташ экипажĕ калама та çук паттăррăн çапăçнă. Пĕр вырăнтан тӳррĕмĕн тĕллесе персе, вăл противникăн 3 танкне çунтарса янă. Тăшман снарячĕ башньăна тивнипе башньăри стрелок стройран тухнă. Ун вырăнне танк командирĕ хăй йышăннă. Тăшман çине каллех снарядсем ывтăнма тытăннă.

Нимĕçсем фронтăн урăх участокĕсенче те танксемпе контратакăсем тунă, вăл контратакăсене пур çĕрте те пысăк çухатусем кӳрсе сире-сире янă.

З. ЛИПАВСКИЙ.

ПĔР ÇАПĂÇУРА ТĂШМАНĂН 6 САМОЛЕТНЕ ПЕРСЕ ӲКЕРНĔ

КАНТĂР ФРОНЧĔ, майăн 21-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Пирĕн самолетсен групни задание пурнăçа кĕртнĕ хыççăн каялла килнĕ. Совет машинисем çине виçĕ енчен тăшманăн 9 самолечĕ вĕçсе пынă. Пирĕн бомбардировщиксем йĕркеллĕнех малалла вĕçнĕ, çичĕ истребитель хура çăхансене хирĕç атакăна тухнă. Приказчиков, Егоров, Штукин летчиксем ăнăçлă маневр тунипе пĕрер «Мессершмитт» ӳкернĕ. Тепĕр темиçе минутăран, таракан фрицсене хăваласа пырса, Павлов, Калугин тата Штукин летчиксем татах виçĕ «Мессершмитт» персе антарнă. Сывлăшри çапăçура пирĕн боецсем чаплă çĕнтерӳ тунă.

Республикăри 13 район çурхи тĕштырăсене акса пĕтерчĕç

Çураки республикăра мĕнле пырать

Республикăри колхозсем майăн 20-мĕш тĕлне сунтыррисене пурĕ 260.879 гектар акнă. Ку вăл сунтыррисем акас плана 74,2 процент пурнăçлани пулать. Иртнĕ çул майăн 20-мĕш тĕлне акнипе танлаштарсан, кăçал çуртыррисене пĕлтĕрхинчен 24.806 гектар ытларах акнă. Оборона фондне хывма тата нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă облаçсемпе районсенчи колхозсене пулăшма çураки планĕнчен ирттерсе 2.500 гектар ытла тырă акса хăварнă.

Элĕк, Вăрнар, Ишлей, Калинино, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Вăрмар, Çĕрпÿ, Шупашкар, Шăхасан, Çĕмĕрле районĕсем тĕштырăсем акас ĕçе вĕçленĕ. Октябрьски тата Елчĕк районĕсем тĕштырăсене ыран-паянах акса пĕтереççĕ. Республикăра тĕштырăсем акмалли плана 94,4 процент пурнăçланă.

Майăн 20-мĕш тĕлне республикăра пĕрремĕш вырăна Хĕрлĕ Чутай районĕ йышăнса тăрать. Кунта çурхи тырăсене акас плана 96,3 процент пурнăçланă. Иккĕмĕш вырăнта Вăрмар районĕ тăрать. Вăл çуртыррисем акас плана 94,3 процент пурнăçланă. Виççĕмĕш вырăнта плана 91,7 процент пурнăçланă Калинино районĕ, тăваттăмĕш вырăнта плана 90,9 процент пурнăçланă Çĕмĕрле районĕ тăраççĕ.

Иртнĕ пилĕк кун хушшинче Хĕрлĕ Чутай, Тăвай, Çĕмĕрле, Канаш районĕсем ĕçĕн хăвăртлăхне малалла ÿстерсе пырса ĕçлерĕç. Çак кунсенче вĕсем 28 процентран пуçласа 35 процента çити ÿсĕм турĕç.

Улатăр, Пăрачкав, Шăмăршă, Куракино районĕсем çак юлашки кунсенче ытти вăхăтрипе танлаштарсан нумайрах акрĕç пулсан та, çураки ĕçĕнче малтанхи пекех кая юлса пыраççĕ.

Нумай районсенчи колхозсем, тĕштырăсем акса пĕтерне хыççăн, каярах юлса акмалли культурăсене акма, çĕрулми лартма тата ирхи çĕртме сухине тума тытăнчĕç. Тĕслĕхрен, Хĕрлĕ Чутай районĕ çĕрулми лартас плана 88,3 процент, Калинино районĕ 82,5 процент, Вăрмар районĕ 80,2 процент, Вăрнар районĕ 76 процент пурнăçланă. Анчах та республикипе çĕрулми лартас плана халĕ 30,5 процент çеç тултарнă. Улатăр, Елчĕк, Куракино районĕсем çĕрулми лартма тытăнмен та.

Ăшă та уяр çанталăк тăни çуртыррисене ăнăçлăн шăтса тухма тата кĕрхи тырăсене вăйлăн ÿсме пыма лайăх майсем туса парать. Партипе совет организацийĕсен тата çĕрĕç органĕсен вăхăта пĕр минута та сая ямасăр çуртыррисене акса пĕтерме кирлĕ мерăсене йышăнмалла. Ĕçсен пахалăхĕ çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Республикăри колхозсен кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илме пур майсем те пур. Кăна тăвас тесен, пуринчен малтан çуракине большевикла йĕркелĕхпе тата агротехника кăтартăвĕсене пурнăçласа пырса ирттерес пулать.

Кашни колхозник тăрăшса ĕçлет

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 21-мĕш. (Телефонпа). Пирĕн колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă историллĕ приказпа хавхаланса, çураки ĕçĕсене пысăк активлăхпа хутшăнчĕç. Çавă вара пире çуракине вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ хăвăртлăхпа туса пыма пулăшать. План тăрăх колхоз тĕштырăсене вунă кун хушшинче акса çитермелле пулнă. Эпир ку ĕçе 8 кун хушшинче ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр. Çак хушăра 154 гектар сĕлĕ; 50 гектар тулă, 30 гектар пăрçа тата ытти тырăсене пурĕ 283,9 гектар акрăмăр. Çураки планне колхоз пысăк пахалăхпа пурнăçларĕ, планран ирттерсе 39,9 гектар тĕштырăсем акрĕ.

Ака ĕçĕнче колхозник И. Великанов юлташ ертсе пыракан 6-мĕш бригада малта пычĕ. Вăл тĕштырăсем акас ĕçе 7 кун хушшинче вĕçлерĕ. Уйрăм колхозниксем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Годунов, Мартынин, Макаров колхозниксем кунне 3 вăрт гектар тырă акас вырăнне виçĕ гектар çурă акса пычĕç. Колхозник В. Тарасов уйрăмах пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕ. Вăл 63 çулта пулсан та, çуракинче ĕçрен пĕрре те юлмарĕ. Кашни кунах нормăна ирттерсе пурнăçласа пычĕ.

Çураки вăхăтĕнче колхозри агитаторсем те нумай хут лайăхрах ĕçлени палăрать. 6-мĕш бригадăра И. Тимофеев, 1-мĕш бригадăра Викторов агитаторсем сухаçăсем, сÿреçĕсем тата тырă акакансем патне уя тухса тăтăшах хаçатсем вуласа пачĕç. Колхозăн кашни бригадинчех стена хаçачĕсем икшер номер тухрĕç.

Хальхи вăхăтра эпир техникăлла культурăсене те акса çитертĕмĕр. Ыранпаянах çĕрулмипе пахча-çимĕçсене лартса çитеретпĕр. Пахча-çимĕç бригади 2 гектар кишĕр, çур гектар сухан, 0,3 гектар арбуз тата ытти çимĕçсене те чылай лартнă ĕнтĕ.

Пирĕн колхозра ваттисем те, çамрăк ачасем те, арçынсем те, хĕрарăмсем те активлăн ĕçлеççĕ. Кашни колхозник, колхозница вăйлă тырпул, пахча-çимĕç туса илессишĕн пухăçлăн ĕçлеме тăрăшать. Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене эпир вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек лайăх туса ирттерсе пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешетпĕр. Хамăрпа ăмăртса ĕçлеме Турханти «Комбайн» колхоза социализмлă ăмăртăва чĕнтĕмĕр.

Ф. ЯКОВЛЕВ.
Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

ĔÇ ДИСЦИПЛИНИНЕ ÇИРĔПЛЕТМЕЛЛЕ

ЕТĔРНЕ, майăн 20-мĕш. (Телефонпа). Паян районри 20 колхоз тĕштырăсем акса пĕтерсе çĕрулми лартма тытăнчĕç. Анчах районри чылай колхозсенче çуртыррисене акас ĕç вăраххăн пулса пырать.

«17-мĕш партсъезд» колхозăн çурхи тырăсене 510 гектар акмалла, паянхи куна 365 гектар çеç акнă. Колхозниксемпе колхозницăсем кунта ĕçе ирхине 7—8 сехетре çеç тухаççĕ, ĕçе тивĕçлипе туса пымаççĕ. Çуракинче ĕçлеме палăртнă колхозниксем ытларах колхоз правленийĕнче ларса вăхăта ирттереççĕ. Çавăн пекех Атликассинчи «Борец» колхоз та çураки ĕçĕпе юлса пырать. Тĕштырăсем акас плана кунта 30 процент çеç пурнăçланă.

Çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттересси колхозниксен чи малта задачи пулса тăрать. Çакна колхоз руководителĕсен лайăх ăнланмалла. Ĕçе тивĕçлипе организацилесе, тĕштырăсем акас плана халех вĕçлемелле.

А. КРАСНОВ.

Клевера çумкурăксенчен тасатрĕç

ОКТЯБРЬСКОЕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çак кунсенче иккĕмĕш çул ÿсекен клевера çумкурăксенчен тасатрĕç.

В. ВЛАДИМИРОВ.

—◎—

Чуптару кампанине ертсе пымаççĕ

СĔНТĔР, майăн 21-мĕш. (Хамăр корр., телефонпа). Выльăхсене чуптарас кампанине анлăн сарма вăхăт. Кăçал ку ĕçе уйрăмах пысăк тимлĕхпе туса ирттермелле. Мĕншĕн тесен чуптару кампанине ăнăçлăн туса ирттерничен колхозсемпе колхозниксем выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ăнăçлăн ÿстерсе пырас ĕç килет. Çакна колхоз руководителĕсен, выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен колхозниксен шута илмелле. Кăçал кашни выльăха пĕтĕлентерсе хăварма тăрăшмалла.

Муркаш ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан тата «Çĕнĕ Юнга» колхозсем выльăхсене пĕтĕлентерсе хăварас плана пур выльăхсем енĕпе те ытлашшипех пурнăçланă.

Анчах районра выльăхсене пĕтĕлентерес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Майăн 20-мĕш тĕлне мĕнпурĕ те 449 кĕсрене, 896 ĕнене, 478 сысна çеç пĕтĕлентернĕ. Уйрăмах ĕнесене пĕтĕлентерес ĕç çителĕксĕр пулса пырать.

Çатракассинчи «Малалла» колхозăн план тăрăх 35 ĕне пĕтĕлентермелле, 15 ĕнене çеç пĕтĕлентернĕ. «Пионер» колхозăн 5 кĕсре пĕтĕлентермелле пулсан, халĕ пĕрне çеç пĕтĕлентернĕ. Çавăн пекех Кашмаш ялсоветĕнчи колхозсенче те ку ĕç хăй тĕллĕн çеç пулса пырать.

Колхозăн ултă ферма

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхоз лаша, ĕне, сурăх, сысна, чăх-чĕп ĕрчетес тĕлĕшпе иртнĕ çулта пысăк çитĕнÿ турĕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхсене ĕрчетес плана иртнĕ çул пур йышши выльăхсем енĕпе те ăнăçлăн пурнăçланă.

Иышлă фермăсем колхоза çулсерен пысăк тупăш параççĕ. Çакна шута илсе, колхозниксем кăçал тата тепĕр ферма организацилеме йышăнчĕç. Колхозăн улттăмĕш ферми — хурсен ферми пулчĕ. Нумай пулмасть колхоз хурсем илчĕ. Фермăна ертсе пыма К. Семенов колхозника лартрĕç.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе начарлатнă

ШАХАСАН. Чулкăмака ялсоветĕнчи «Память Ильича» колхоз иртнĕ çулсенче хурт-хăмăр утарĕ организацилени. Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе пысăк вырăна хурса, колхоз утарта уйрăм пÿрт туса панă. Вăл пÿртре хурт-хăмăрсене усрама лайăх майсем пулнă. Анчах, юлашки икĕ çул хушшинче колхоз правленийĕ çак ĕç çине тивĕçлĕ пек çавăрăнса пăхман пирки, хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç начарланма пуçларĕ. Хурт-хăмăрсем усракан пÿрте çурхи шывсенчен хÿтĕлемен пирки, вĕллесем ларнă сакайне шыв кĕнипе кăçал 5 çемье вилчĕ. Колхоз правленийĕ хурт-хăмăрсене ĕрчетсе пырассишĕн тăрăшни курăнмасть. Лайăх пуçланă ĕç япăхланса пырать.

А. ФЕДОРОВ.

Шкулсенчи пĕлÿ тĕрĕслевĕсем

Шкул ачасене лайăх вĕрентнĕ

КАНАШ. (Хамăр корр.). Ĕнер, майăн 21-мĕшĕнче, районри пур шкулсенче те пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пуçланчĕç. Тĕрĕслÿсен малтанхи кунĕ кăçалхи вĕренÿ çулĕнче вĕренекенсем политикăпа идея тĕлĕшĕнчен нумай ÿснине кăтартса пачĕ. Вĕренÿ çулĕ отечественнăй вăрçăн йывăр условийĕсенче иртрĕ пулсан та, кăçал нумай шкулсем ачасене лайăх вĕрентнĕ.

Канашри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта (директорĕ Шайбина юлташ) пĕлÿ тĕрĕслевне лайăх хатĕрленнĕ. Вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе консультаци йĕркеллĕн ĕçлет. Ĕнер 10-мĕш класра вĕренекенсем вырăс чĕлхипе сочиненисем çырчĕç. Сочиненисене 15 ачаран — 8 ача «отлично», 3 ача «хорошо», 4 ача «посредственно» паллăсем илчĕç.

Паян 5-мĕш класра вырăс чĕлхипе диктант пулчĕ. 34 вĕренекенрен 15 çын «отлично», 15 çын «хорошо», 4 çын «посредственно» паллăсем илчĕç. Кунта класснăй руководительница пулса вăтă учительница Н. Н. Тихонова ĕçлет. Тихонова шкулшăн пĕтĕм вăйне тата пĕтĕм пĕлÿлĕхне парса тăрăшать, çавăнпа унăн класĕнчи ачасем те аван вĕренеççĕ.

7-мĕш «Б» класра «Подвиг учительницы Ляшковой» темăпа изложени çырчĕç. Изложенипе 18 ачаран 1 ача «отлично», 5—«хорошо», 12 çын «посредственно» илчĕç.

4-мĕш класра чăваш чĕлхипе диктант туса ирттерчĕç. Класри 22 ачаран 10 ача «отлично», 7 ача «хорошо», 5 ача «посредственно» паллăсем илчĕç. Анчах та кунта çакна палăртас пулать. Тăван чĕлхепе тĕрĕс çырасси çине учительсем хăйсем те тăрăшса пăхмаççĕ. Учительница Матвеева юлташ вĕренекенсем орфографи тĕлĕшпе тăвакан йăнăшсене шута илмесĕр хăварнă. Сăмахран, вĕренекенсем «таврăннă» тата «тавăрнă» тесе çырнă. Кунта вăл пĕрине те йăнăш çырнă тесе палăртман. Çавăн пекех ытти йăнăшсене асăрхаманнисем те пулнă. Ку, паллах, тăван чĕлхе çине тирпейсĕррĕн пăхнинчен килнĕ.

П. НИКОЛАЕВ, Т. ИВАНОВ.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерес ĕçе тивĕçлине организацилемен

СĔНТĔР. (Хамăр корр., телефонпа). Çатракассинчи туллимар вăтам шкулта пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерме тивĕçлипе хатĕрленсе çитеймен. Тĕрĕслеве 4—5-мĕш классенче 53 ача пымалла пулнă, вĕсенчен 6 ача пыман.

6-мĕш класра вĕренекен Зоя Олбутовăна ялсовет исполкомĕнче дежурнăйра усранă. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Пузырева юлташ кун çинчен пĕлнĕ, анчах Олбутовăна испытанине каймашкăн ирĕк паман. 5-мĕш класра вĕренекен Николай Назаров «Родина» колхозăн хирĕнче кунĕпех суха тунă. Назаров пĕлÿ тĕрĕслевĕсене каймаллине колхоз бригадирĕ пĕлнĕ, анчах ĕçрен хăтарман.

Сĕнтĕрти вăтам шкулти 7-мĕш класра вырăс чĕлхипе диктант çырнă. Кунта учитель диктантăн текстне шыраса 15 минута ирттернĕ.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсенче малтанхи кун пулнă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерес пулать.

—◎—

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

СĔНТĔР. Ялсенче хуçалăхра кирлĕмар тимĕр-тăмăра пухас ĕç пырать. Районĕпе 80 тонна ытларах пухнă. Вăл шутран Сергеевкăри пуçламăш шкулта вĕренекенсем 2 тонна, Кăпасри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 1 тонна, «Свобода» колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕ 800 килограмм пухса панă.

Г. АКИМОВ.

„Пионер Чувашии“ танк тума

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Хиртри Явăшри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Пионер Чувашии» танк тума пурĕ 1.200 тенкĕ укçа пухса пачĕç. Ку ĕçе учитель М. Табакова юлташ пуçарса ертсе пычĕ.

П. МАРТЫНОВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Ăмăрту тивлечĕсем

Май уйăхĕ ячĕпе пынă социализмлă ăмăртура Шупашкарти эрех завочĕ çĕнĕ çитĕнÿ турĕ — апрель уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарчĕ. Ĕçри çĕнтерÿ завод коллективне тăрăшса ĕçлеме хавхалантарчĕ. Кашни цех, кашни бригада, кашни работница май уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Çавна май цехпа цех, бригадăпа бригада тата работницăпа работница ăмăртăва тухнă. Ăмăртура халĕ К. Малышева юлташ ертсе пыракан цех малта пырать. Цех коллективĕ, апрельри плана 150 процент тултарнăскер, çак уйăхра тата тухăçлăрах ĕçлессишĕн кĕрешет. Работницăсенчен чылайăшĕсем нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ. Ф. Петухова, В. Павлова, М. Воротникова, А. Андреева, М. Морозова стахановкăсем кулленхи нормăна пĕрмаях 180 процент тултараççĕ.

Савăт-сапасем çăвакан цехри Беляшовăпа Захарова юлташсен бригадисем те ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем апрельри плана 140-шер процент тултарнă, ку уйăхра та ăнăçлăн ĕçлеççĕ, нормăсене кашни кунах ирттерсе тултараççĕ, ĕçе лайăх пахалăхпа тăваççĕ.

Механически цех коллективĕ ăмăртура станоксемпе туллин усă курассишĕн, çунтармалли япаласене перекетлессишĕн кĕрешет. Слесарьсем, Васинпа Крашенинников юлташсем, ĕç нормисене ирттерсе тултарнипе пĕрлех, çамрăксене станоксемпе ĕçлеме вĕрентеççĕ. Кочегар Трифонов юлташ çунтармалли япаласене уйăхран уйăха перекетлесе пырать.

Завод дирекцийĕпе парти организацийĕ ăмăрту мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Т. И.

ЗАВОДĂН ПИРВАЙХИ ТЫСЯЧНИКĔСЕМ

КАНАШ. Май уйăхĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртура Канашри вагонсем юсакан заводра нормăна вунă хут ирттерсе тултаракансем пулчĕç. Апрелĕн 28-мĕшĕнче термически отделенин инструментальнăй цехĕнче ĕçлекен рабочисем Смирновпа Моряков юлташсем 10-шар норма тултарнă. Майăн 2-мĕшĕнче вĕсем 11-шер норма тунă. Çав цехра ĕçлекен фрезеровщик Осипов юлташ, медальпе наградăланăскер, майăн 1-мĕшĕнче нормăна 1037 процент тултарнă.

Заводри стахановецсем чылайăшĕ сменăри ĕç нормине 5—6 хут ирттерсе тултараççĕ.

М. АНДРЕЕВ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Спичка тăвакан çĕнĕ фабрикăсем

Кăçал Бурят-Монголире спичка тăвакан виçĕ фабрика çĕнĕрен лартса ĕçе яраççĕ. Спичка тума вĕренмешкĕн специалистсен ушкăнĕ Главспичпром фабрикисене кайнă. (ТАСС).

Ленинградецсем пахча-çимĕçсем лартаççĕ

Пахчасем—çĕнĕ фронт. Ленинградецсем пахча-çимĕçсене лартма организованно тухаççĕ.

Предприятисен çĕнĕрен организациленнĕ 300 яхăн подсобнăй хуçалăхĕсем пахча-çимĕçсене лартма тытăнчĕç. Кăçал пахча-çимĕçсем 7 пин гектар ытла лартаççĕ.

Рабочисемпе служащисем кашни уйрăмшарăн пĕтĕмпе 3 пин гектар çине пахча-çимĕçсем лартаççĕ. (ТАСС).

Кăнтăрта утă çулаççĕ

Казахстанри кăнтăрти районсенче массăллăн утă çуласси пуçланнă. Пирвайхи пиншер гектарсене çулса пухнă. Казахстанри колхозсен пушхирте тата сăрт-тусенче 12 миллион гектар çинчен утă çулса пухса кĕртес пулать. Чи лайăх çарансем çинчен çулса пухнă утта Хĕрлĕ Çарăн кавалери чаçĕсем валли хатĕрлеççĕ. (ТАСС).

* * *

Кабардино-Балкаринчи колхозсем выльăхсене хĕлле сÿретекен вырăнсенче утă çулма тытăннă. Кăçал обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕ 650 пин пуçран иртсе каять. Çавăн чухлĕ выльăх валли апат çителĕклĕ хатĕрлемешкĕн колхозниксем выльăх-чĕрлĕх сÿремелли вырăнсенчи, сăртсен айлăмĕсенчи тата тăвайккисенчи курăксене çулса хатĕрлеме тăрăшаççĕ. (ТАСС).

Çамрăк рабочисене вĕрентсе кăларни

Майăн 21-мĕшĕнче Мускавра тата Совет Союзĕнчи ытти хуласенче тăватă уйăх вĕренмелли ФЗО шкулĕсенчен вĕренсе тухакансем мастерлăха мĕнле пĕлнине тĕрĕслесси пуçланнă. Январь уйăхĕнче тухнисемсĕр пуçне, пилĕк уйăх хушшинче шкулсенче вĕренсе тухмалла пулнисене те, мастерлăха срокченех вĕренсе çитнисене, палăртнă ĕç нормисене яланах тултарса пыракансене тата ирттерсе тултаракансене, тĕрĕслев витĕр тухма ирĕк панă.

Вĕренсе тухакансен пĕрремĕш групин тĕрĕслевĕсем май уйăхĕн вĕçне çитиччен пыраççĕ. Çак группăра — 70.000 çын.

Июнь уйăхĕнче ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсен иккĕмĕш группине — 120.000 çынна вĕрентсе кăлармалла.

Вĕренÿ апрелĕн 1-мĕшĕ хыççăн пуçланнă шкулсенче мастерлăха мĕнле пĕлнине тĕрĕслес ĕçе июль уйăхĕн вĕçĕнче туса ирттермелле.

Августăн 1-мĕш тĕлне промышленность лайăх вĕренсе çитнĕ 200.000 çамрăк рабочи илет. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисемшĕн тăрăшмалла

СĔНТĔР. (Хамăр корр.). Районри социальнăй обеспечени отделĕ кăçалхи çулăн 1-мĕш кварталĕнче Хĕрлĕ Çар воинĕсен çемьисене пособи шучĕпе 419.895 тенкĕ панă. Ку чăннипех те пысăк пулăшу. Анчах та Сĕнтĕр райсобесĕ хĕрлĕ воинсен çемьисен ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлет тесе калама çук-ха. Сăмахран, «Пионер» колхоз членĕ Ираида Николаева çур çул ытла ĕнтĕ тивĕçлĕ пособие илеймесĕр пурăнать (унăн упăшкине иртнĕ кĕркуннех Хĕрлĕ Çар ретне мобилизациленĕ). Николаева райсобеса заявлени пани 6 уйăх ытла. Çак хушăра вăл райсобеса темиçе хутчен те çитнĕ. Райсобес унăн заявленине çаплах пăхса тухмасть. Кунта райсобесра ĕçлекенсен сÿрĕклĕхĕ, вĕсем хăйсен ĕçĕ çине васкамасăр пăхни курăнать. Уполнаркомзаг хăшпĕр тивĕçлĕ çемьесене поставкăсенчен хăтармалла тунă. Анчах, ĕçне пăтратса янипе, çав хăтарнă çемьесене каллех поставка обязательствисем панă. Çавăн пирки райуполнаркомзага апрелĕн 17-мĕшĕнче темиçе çын жалобăпа пынă. Çакна пула Сĕнтĕр райсовет исполкомĕ уполнаркомзаг докладне итлесе, унăн ĕçĕсене пăхса тухрĕ. Райсовет исполкомĕ уполнаркомзагăн чылай тĕрĕсмарлăхĕсене палăртрĕ. Вăл тивĕçлĕ çемьесене поставкăран хăтарман, çак вăхăтрах хăшпĕр хуçалăхсене (Кашмаш ялсоветĕнче) поставкăсенчен пĕр тивĕçсĕр хăтарнисем те пулнă. Райсовет исполкомĕ райуполнаркомзага çирĕп кăтартусем парса, ăна хăйĕн йăнăшĕсене хăвăртрах тÿрлетме хушрĕ.

Г. АКИМОВ.

1942 çулта аслă шкулсене вĕренме илмелли йĕрке

Аслă шкулсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕ 1942 çулта аслă учебнăй заведенисене вĕренме илес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртнă. Кăçал аслă учебнăй заведенисене отлично вĕренсе тухнисене, 1941 тата 1942 çулсенче вăтам шкулсенчен пур предметсем тăрăх та «хорошо» тата «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ. ВУЗ-сенче вырăнсем пулсан, 1941 тата 1942 çулсенче «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе экзамен тытнисене те экзаменсăрах илеççĕ. Пĕр-пĕр аслă учебнăй заведенисенче вырăнсем çитмеççĕ пулсан, вĕсенче вĕренме экзаменсемпе илеççĕ, экзаменсене августăн 15-мĕшпе 25-мĕш хушшинче туса ирттерме йышăннă.

ВУЗ-сене кĕресси çинчен паракан заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 31-мĕшчен, заочно вĕренмелли институтсене тата отделенисене августăн 31-мĕшчен илмелле.

1941—1942 çулсенче вăтам шкулсенчен «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухнисене студентсен шутне кĕртессине июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 31-мĕшчен туса ирттереççĕ, экзаменсăрах илекен ытти çынсене августăн 1—15-мĕшсем хушшинче, экзаменпа илмеллисене августăн 25-мĕшĕнчен пуçласа 29-мĕшчен илеççĕ.

Пĕр-пĕр сăлтав тăрăх пĕр аслă учебнăй заведенине кĕрейменнисем ытти учебнăй заведенисене заявленисем пама пултараççĕ. Çав çынсене аслă шкула илмелли юлашки срок сентябрĕн 10-мĕшĕ пулать.

ВУЗ-сен директорĕсене пулăшу кирлĕ студентсене, аманса, контузи пулса е чирлесе Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕнчен аслă шкулсене таврăннă отечественнăй вăрçăн участникĕсене, кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчен стипенди илекенсен шутне кĕртме ирĕк панă. 1941—1942 вĕренÿ çулĕнчи иккĕмĕш семестртан пуçласа отечественнăй вăрçăн участникĕсене-студентсене вĕреннĕшĕн тÿлесрен хăтараççĕ. Аслă шкулта вĕреннĕшĕн тÿлессинчен, кунсăр пуçне, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕн рядовой тата кĕçĕн составĕнче тăракансен ĕçĕпе пурăннисене, «Рядовой тата кĕçĕн начальствующи составри çар служащийĕсен çемьисене вăрçă вăхăтĕнче пособисем памалла тăвас тата парса тăрас йĕрке çинчен» СССР Верховный Совечĕ 1941 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх пособисем илекенсене хăтараççĕ.

Аслă шкулсен Комитечĕ ВУЗ-сен директорĕсене май уйăхĕ хушшинче студентсен столовăйĕсене юсаса тата йĕркелесе çитерме, вĕсен ĕçĕсене контроль туса тăрассине вăйлатма, Суту-илÿ халăх комиссариачĕн органĕсемпе пĕрле çĕнĕ столовăйсем уçма, студентсене тата преподавательсене тăрантарас тата апат-çимĕç парас ĕçе лайăхлатма ВУЗ-сен çумĕнче подсобнăй хуçалăхсем тума хушнă. (ТАСС).

Италири йывăр лару-тăру

НЬЮ-ИОРК, майăн 21-мĕш (ТАСС). Америкăн журналисчĕсем, Италирен тытса чарнă хыççăн ирĕке кăларнăскерсем, унта экономика тата политика тĕлĕшпе лару-тăру йывăрланса кайни çинчен пĕлтереççĕ. Çапла, сăмахран, нефть çитмен пирки çар карапĕсем те нумайĕшĕ ĕçсĕр тăраççĕ. Уйрăм çынсене автомобильсемпе çÿреме чарнă.

Çĕршывра, çавăн пекех тата, кăмрăк, магний, пăхăр, тăхлан, çăм, çĕрмамăкĕ çитменни питех те палăрать.

Италире пурăнакансем кунне пĕтĕмпе те 150 грамм кăна çăкăр илеççĕ, вĕсене пахча-çимĕçсемпе улма-çырласем памаççĕ. Çав продуктсене пурне те Германие яраççĕ. Выçăллă-тутăллă пурăннă пирки тĕрлĕ чир-чĕрсем сарăлас хăрушлăх ÿссе пырать.

Юлашки вăхăтра Итали государствин парăмĕ чылаях ÿссе кайнă, вăл 400 миллиард лир чухлĕ парăма кĕнĕ.

«Союзлă» Италирен Германин фашистла пуçлăхĕсем паха япаласене сахал мар сăптăрса илнĕ. Çапла, сăмахран, Геринг пĕр миллион долларлăх ытла художественнăй паха япаласене сутăн илнĕ. Искусство япалисене Германин йышлă миссийĕсем те васкаса илеççĕ.

Çак вăрçăра Италири фашистсен пуçлăхĕсем Муссолини, Чиано, генерал Стараче, тулашри суту-илÿ министрĕ Риккарди тата ыттисем те вăйлăн пуйрĕç.

Çĕршыври тĕрмесемпе концентрациллĕ лагерьсем лăках тулса ларни пулин те, Итали халăхĕ фашистла режима хирĕç тăрассине вăйлатать.

ГЕРМАНИРИ ВЫÇЛĂХ

СТОКГОЛЬМ, майăн 21-мĕш. (ТАСС). Берлинри тата ытти хуласенчи халăх хушшинче унта продовольстви нормисене татах чакарасси çинчен калакан хыпар сарăлнă. Халăх тăраса ÿкнĕ, çавăнпа та Германи пичечĕ çавăн пек хыпар саракан нимĕçсене чылай статьясенче ятласа çырать.

«Дейче Рундшау» хаçат нимĕçсене: «çакăн пек халăçнисемпе вĕсем тăшмана пулăшаççĕ», тесе асăрхаттарать.

ЛОНДОН, майăн 21-мĕш. (ТАСС). Нейтральнăй çĕршывсен представителĕсем, Германирен халĕ кăна таврăннăскерсем, çапла пĕлтереççĕ: магазинсенче халĕ тăрăхса пăшăлтатнине часчасах илтме пулать, ĕлĕк вара çынсем пăшăлтатса калаçма та хăяйман. Германирен илсе килнĕ çăкăр татăкне анализ туни кăтартса панă тăрăх, çав çăкăра пуринчен ытла йывăç хуппи çăнăхĕнчен пĕçернĕ пулнă.

Çав çынсемех калаçса панă тăрăх, Гитлер Зальцбург хулинче Муссолинипе тĕл пулма кайнă чухне чугунçулăн пĕр участокĕнче икĕ енĕпе те хĕрарăмсем тăрса тухнă, вĕсем: «тавăрса пар пире хамăрăн упăшкасемпе ывăлсене», тесе кăшкăрнă.

ГЕРМАНИРИ ВĔЛЕРÜСЕМ

СТОКГОЛЬМ, майăн 20-мĕш. (ТАСС). Германире тухса тăракан хаçатсенче нумайĕшĕнче çак юлашки кунсенче продовольстви çаратнăшăн йышăннă приговорсене чылай пичетлесе кăларнă. Нумаях пулмасть, Данциг районĕсенчен пĕринче снабжени пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ Литца асаплантарса вĕлернĕ. Унăн айăпĕ çакă пулнă: вăл хăй амăшĕпе арăмĕ патне продовольстви хурса посылка янă пулнă. Унăн амăшĕпе арăмне икĕ çул çурăллăха тĕрмене хупмалла тунă. Саботаж тунă тесе айăплакансем пирки те час-часах вĕлермелле тунă приговорсем йышăнаççĕ.

Гитлеровецсем пуринчен те ытла тыткăна лекнĕ çынсене тарма пулăшакансене тата гитлеризма хирĕçле ĕçлекенсене пурнăç кăтартмаççĕ, йывăр асапсем тÿстерсе вĕлереççĕ.

Лионра Гитлера хирĕçле демонстраци пулса иртнĕ

НЬЮ-ИОРК, майăн 20-мĕш. (ТАСС). Лионра майăн 18-мĕшĕнче Гитлера хирĕçле пысăк демонстраци пулса иртнĕ, демонстрацие француз çамрăкĕсем 1.500 çынна яхăн хутшăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПРИНИМАЮТСЯ В РЕМОНТ примуса и бытовая металлическая посуда. Обращаться в мастерскую Горпромкомбината: ул. Плеханова, д. № 28. 2—1.

ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКАНСКОЙ КОНТОРЕ ГЛАВНЕФТЕСБЫТА на постоянную работу требуются: старший плановик, юрисконсульт, начальник инспекции, начальник ВОХР и ПВО, ст. бухгалтера для работы на нефтебазах.
За справками обращаться: г. Чебоксары, ул. Байдукова, 8, Отдел кадров. Телефон 3-33.

РЕМОНТНО-СТРОИТЕЛЬНОЙ КОНТОРЕ требуются: шофер на машину ГАЗ-А. А., строительные рабочие следующих специальностей: плотники, печники, кровельщики, столяры, маляры, штукатуры, подсобные рабочие.
Обращаться по адресу: Ремонтно-строительная контора, ул. Карла Маркса, дом № 4.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 491. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 [illegible]